*Канашлу*

# Пултаруллă ачасене аталанмашкăн пулăшмалла

***Пуш уйăхĕн 25-мĕшĕнче Правительство çуртĕнче ачасен интересĕсене хӳтĕлес тĕллевпе 2012-2017 çулсем валли йышăннă Наци стратегине пурнăçлас енĕпе Чăваш Республикин Пуçлăхĕ çумĕнче йĕркеленĕ координаци канашĕн ларăвĕ иртрĕ. Ăна Михаил Игнатьев ертсе пычĕ.***

Кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйтупа – Чăваш Енĕн пултаруллă ачисене патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтернипе – ЧР вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕн тивĕçне вăхăтлăх пурнăçлакан Светлана Петрова тухса каларĕ.

Светлана Владимировна палăртнă тăрăх – Наци стратегийĕн тĕп çул-йĕрĕнчен пĕри – пултаруллă ачасене палăртасси. Ку енĕпе туса хатĕрленĕ концепципе килĕшӳллĕн вĕсене пулăшмалли программăна шкул çулне çитичченхи тапхăртанах çирĕплетнĕ. Чăваш Енĕн маттур ачисене аталанмашкăн май туса парассишĕн кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен вĕренӳ тытăмĕ яваплă. Шкул умĕнхи учреждение финансласси халĕ унта миçе çын çӳренипе тӳрремĕнех çыхăннă. Вăтамран кашни ача пуçне çулталăкра 40 пин тенкĕ ытла тăккалама палăртнă. Шкул умĕнхи пĕлӳре те пуçласа федерацин патшалăх стандарчĕпе усă кураççĕ. Унта çакна уçăмлатнă: шкул çулне çитменнисен учрежденийĕнче пĕчĕккисен пултарулăхĕпе чун туртăмне вăй илтермешкĕн мĕн пур условипе тивĕçтермелле. Урăхла каласан вĕсене мĕне пултарнине кура ушкăнсене пайлама юрамасть, аталанмашкăн пурин валли те пĕрешкел май туса памалла. Асăннă учреждение çӳрекенсем виçĕ – пĕчĕккисен, кĕçĕннисен тата шкул çулне çитменнисен – ушкăна кĕреççĕ. Юлашкийĕсем тĕлĕшпе пирĕн хутлăхра ыйтăва татса панă – виçĕ çул тултарнисене пурне те садикпе тивĕçтернĕ.

Инфратытăма çĕнетсе улăштарнă, никĕс шкулĕсем, уйрăм предмета тарăннăн вĕрентекен гимнази-лицей йĕркеленĕ май инноваци учрежденийĕсен пултаруллă ачасене турă панине аталантармашкăн условисем кирлĕ чухлех.

Вĕренӳ тытăмĕн çитĕнĕвĕсем те куç умĕнчех: иртнĕ çул республикăри 12 шкул Раççейри чи лайăх 500 вĕренӳ учрежденийĕ йышне кĕнĕ, Шупашкарти ятарлă коррекци шкулĕ çĕр-шывра пĕрремĕш вырăн йышăннă. Шупашкарти ачасемпе çамрăксен пултарулăх керменĕ – çĕр-шыври хушма пĕлӳ паракансен хушшинче кăтартулли.

Чăваш Республикин Президенчĕн стипендине пултаруллă çамрăксене çуллен парса тăни те малалла ăнтăлма хистени пирки Светлана Петрова сăмах пуçарсанах Михаил Игнатьев: «Талантлă ачасене пулăшатпăр, анчах та вĕсем хăйсен ĕçĕнче юлни-юлманнине тишкеретĕр-и?» – тесе ыйтрĕ. Мониторинг кăтартнă тăрăх вĕсен 70 проценчĕ вырăнта тĕпленмест иккен. Шкултан лайăх паллăпа тухакансене ăнланма пулать – вĕсем пуян пĕлӳ илмешкĕн пысăк хуласене çул тытаççĕ, ыттисем вара? Республика Пуçлăхĕн шухăшĕпе – асăннă стипендипе тивĕçтермелли условисене, тен, тепĕр хут пăхса тухса çирĕплетмелле?

Маттур яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа палăртмашкăн предмет олимпиадисем витĕмлĕ пулăшаççĕ. Шкул ачисен 80 проценчĕ вĕсене хутшăть. Республикипе илес тĕк ку енĕпе уйрăмах Çĕнĕ Шупашкар, Шупашкар, Улатăр, Çĕрпӳ хулисемпе Йĕпреç районĕсенчи шкулсенче ăс пухакансем пуçаруллă. Шăмăршă, Етĕрне, Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай тăрăхĕнчисем вара сӳрĕкреххи сисĕнет.

Михаил Игнатьев çавна май кун пек чухне Светлана Петрова мĕн сĕнме пултарнипе интереслевчĕ. Хуравĕ çийĕнчех тупăнчĕ: муниципалитетсен пултаруллă ачасене пулăшмалли программăсене тĕплĕн тишкерсе хакламалла, кирлĕ тĕк финанс уйăрмалла, кадрсем хатĕрлес енĕпе тимлĕ пулмалла, мĕншĕн тесен çамрăк талантсемпе ĕçлемешкĕн хăйне евĕр ăсталăх кирлĕ...

ЧР культура, физкультурăпа спорт министрĕсен тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Альбина Алексеева тата Алексей Яковлев культура тата спорт тытăмĕсенче пултаруллă çамрăксене хавхалантарас енĕпе мĕнлерех ĕçлени çинчен каларĕç.



Тухтăрсен занятирен справкăпа хăтарма ирĕк çук иккен, вĕсем сиплев физкультури сĕнме пултараççĕ. Хевтесĕрсем е чирлисем валли, паллах, ятарлă урок ирттермешкĕн тĕплĕн хатĕрленмелле тейĕпĕр. Сыввисем, пăлахая персе урока сиктерекенсем тĕлĕшпе мĕн тумалла? Хуравĕ ансат: аслисен, тренерсен эппин, хăйсен тĕслĕхĕпе çамрăксене хавхалантарма пĕлмелле. Çапла тумашкăн вĕсен ăспа кăна мар, чунпа та пуян пулмалла.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова Чăваш Енре социаллă тăлăхлăха профилактикăласа участок службипе мĕнле ĕçленипе, ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнисене çемьене вырнаçтарас енĕпе пухнă паха опытпа паллаштарчĕ, ачасен правине хӳтĕлекен Вячеслав Рафинов уполномоченнăй тăнăçсăр çемьесене тупса палăртас, ачасене çемьесене тавăрас, социаллă тăлăхсене тăван кил ăшши парнелекенсене палăртас ыйтусем çинче чарăнса тăчĕ.

Канашлура çавăн пекех Наци стратегине пурнăçласа Патăрьел, Канаш, Çĕмĕрле тăрăхĕсенче туса ирттернĕ ĕçсем çинчен районсен тата хула администрацийĕсен пуçлăхĕсем Николай Глухов, Владислав Софронов, Любовь Дмитриева пĕлтерчĕç.

■ **Валентина СМИРНОВА**

*Пĕлес тенĕччĕ*

## Тариф çинчен – хаçатра

**Пирĕн поселокра пурăнакансем компьютерпа Интернета кĕрсе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ темиçе хутлă пурăнмалли çурта хутса ăшăтса тăнăшăн, сивĕ тата ăшă шывпа тивĕçтернĕшĕн, хваттерсенчен хура шыва юхтарса тăнăшăн, йăлари хытă каяша пухса турттарнăшăн кашни уйăхра миçе тенкĕ тӳлеттернине пĕлеймеççĕ, мĕншĕн тесен Интернет ĕçлемест. Ертсе пыракан компанин кун пек чух çынсене тӳлев йĕркипе мĕнле паллаштармалла?**

**Н.БЕЛОБОРОДОВ.**
Улатăр районĕ.

РФ Правительствин 2009 çулхи «Коммуналлă комплекс организацийĕсен информацие уçса памалли стандарчĕсем çинчен», 2013 çулхи «Шывпа тивĕçтерес, хура шыва юхтарса кăларас тĕлĕшпе информацие уçса памалли стандартсем çинчен» тата «Ăшăпа тивĕçтерекен, вĕри шыв памалли пăрăхсене пăхса тăракан тата йĕркелекен организацисем информацие уçса памалли стандартсем çинчен» йышăнăвĕсемпе килĕшӳллĕн муниципалитет йĕркеленĕвĕсенче йăлари хытă каяш пухса турттаракан, çуртсене ăшăпа тивĕçтерекен, вĕри тата сивĕ шыв парса тăракан, хваттерсенчен хура шыв юхтарса кăларакан организацисем çирĕплетнĕ çак ĕçсен тарифĕпе, çавăн пекех инвестици программисемпе, вĕсене еплерех пурнăçланипе паллаштаракан информацине ЧР Конкуренци политикипе тарифсен патшалăх службин сайтне вырнаçтарса тата Пичет хатĕрĕсенче пичетлесе пĕлтерме тивĕçлĕ.

■ **Альбина ЕГОРОВА,**
**ЧР Конкуренци политикин тата тарифсен патшалăх службин ертӳçи**

*Ĕçлев*

# Ăçталла çул тытатăн, тăванăм?

***Инçе çула тухсан тăван кĕтес аса килет, çĕнĕ вырăна хăнăхиччен чĕрене тунсăх пусатех. Ют çĕре вăхăтлăха ĕçе кайнă-и е унта тĕпленнĕ-и – хăв çуран чупнă çаран, тинĕс евĕр хумханакан ыраш уйĕ, шăнкăрти юхан шыв ялан куç умĕнче. Сана савса утьăкка сиктернĕ аçу-аннӳрен, тăван-пĕтенрен çывăххи тата мĕн пур-ши çут тĕнчере? Вĕсем, ав, тĕнче касса çӳрекен ывăлхĕрĕшĕн чунне пама хатĕр, тĕрĕс-тĕкел таврăнччăр, турă сыхлатăр тесе пĕрмай кĕлĕ тăваççĕ. Ара, тепĕр тесен, мăн асаттесен çул-йĕрне такăрлатмастпăр-и эпир? Темиçе ĕмĕр каялла хутаç çакса çĕнĕ çĕре куçнисен шăпи хăйне евĕр: тĕнче анлăшĕнче пурин валли те вырăн çитет тесе илĕртни пур чухне те чăнлăхпа килĕшсе тăмасть-çке. Халăхăмăрăн асаплă кун-çулĕнче синкерлĕ самантсем тарăн йĕр хăварнă, çав тапхăра асра тытни паянхи пурнăç тумхахĕсене лайăхрах ăнкарма пулăшать-тĕр. Паллах, этем хутшăнăвĕсенчи пур кăткăслăха ăнлантарса пама çав тери йывăр. Калăпăр, çĕр-аннемĕр сĕткенĕпе ӳснисем юта туртăнас пулăм вăйланнине пурте куратпăр. Çакăн тымарĕсем ăçтан амаланаççĕ? Ĕç рынокĕнчи лару-тăру еплерех? Асăннă ыйтусене сӳтсе явма вăхăт çитнĕ.***

### Тăван çĕртен сивĕнсен

Ĕлĕкрех «отходничество» текен ăнлав анлă сарăлнă. Ютра ĕçлесе çӳрекенсем пирки сăмах пырать. Чăвашсен пĕрремĕш профессорĕ, этнографĕ тата историкĕ Н.В.Никольский XVIII-XIX ĕмĕрсенче Атăл тăрăхĕнчи сахал йышлă халăхсен куçăмне пур енлĕ тишкернĕ, нумай статья пичетленĕ: «Тыр-пул акса тăвасси чăваш юнĕнче ларать. Атăлçи Пăлхар патшалăх çыннисем кăнтăртан кунта килсе вырнаçиччених çĕр ĕç культурин шайĕпе ыттисенчен çӳлерех тăнă. Хресчен ывăлĕ 7-10 çултах сӳрелет, 13-ре вара суха пуç умне тăрать. Çĕрне çемьери арçын пуçне шутласа валеçнипех ĕнтĕ пурне те тивĕçмест вăл. Çавăнпа чăвашсем халĕччен акман-туман лаптăксене тытса илнĕ тĕслĕх нумай. Ун пек хăтланни саккунпа килĕшсе тăмасть иккен. Вара хресчен çав уя пăрахать те çын алли перĕнмен урăх лаптăк шыраса каять. Унтан та хăвалаççĕ апăршасене. Теприсем вара пысăк çемйине тăрантарассишĕн юта кайса тара кĕрешме хатĕр. Çывăхри хуласене – Аçтăрхана, Самара, Ярославле, Бакуна, Саратова кайса ĕçлени çинчен каласа пачĕç. Мускав, Чул хула, Хусан предприятийĕсенче хура ĕçе вырнаçнисем пур. Халăха тухни вĕсен тĕнче курăмне анлăлатать, çапах шапашра ĕçлесе пурăнни пăсать теççĕ. Мĕн енĕпе? Ытти халăхсен килĕшӳсĕр тыткаларăшĕ, килпетсĕр пуплевĕ вĕсене куçать-мĕн. Çав шутра эрех-сăрапа туслашни те. Апла пулин те хресчен çĕртен хăй ирĕкĕпе пăрахса тухса кайнă тĕслĕх пит нумаях мар. Сăмахран, Шăмат вулăсĕнчи Йӳçпан /хальхи Етĕрне районĕ. – **Авт.**/ ялĕнче 200 çын пурăнать, 3-шĕ ют çĕрте тар тăкать», – çырать ăсчахăмăр */Н.В.Никольский çырнисен пуххин 1-мĕш томĕ, 2004 ç/*.

«Хăйсем çитĕнтернĕ тĕш тырра е пахча çимĕçе пасара тухса сутса курнисене каярах çĕр ĕçне тавăрма йывăр. Вĕсем тутарсем пек чееленме хăнăхаççĕ, нухрат мĕнле тумалли майсене чухлаççĕ. Çапла вара купсана тухса пыраççĕ: унччен килсерен чăх çăмарти, çăм пухса çӳрени хăйĕн суту-илӳ вырăнне е лавкка уçма мехел çитерет».

Атăлта кимĕ туртнă çĕрте тăрмашакан чăвашсен пурнăçĕ те кăсăклантарнă Никольские. Кун пирки çапла çырнă йĕркесем тĕл пулчĕç: «Юхан шыв тăрăх пысăк тиевлĕ кимĕ туртасси – питĕ асаплă та йывăр ĕç. Шыв пăртан тасалсан пуçăнаççĕ ку ĕçе çирĕп хул-çурăмлă арçынсем. Сезон вăхăтĕнче 2-4 уйăхра ĕлкĕрмелле. Чул хула, Аçтăрхан, Рыбинск патĕнче ĕçлесе илес текен йышлă. Сĕнтĕр пристанĕ тарăн пулнипе укçине те ытларах тӳлеççĕ. Хресчен ку укçана тек ниçта та ĕçлесе илеймĕ, анчах вăл хăвăрт пĕтет: çĕр акса тумалли хатĕрхĕтĕр кирлĕ, налуксем тӳлесе татмалла, кĕпе-тум туянмалла, вут-шанкă кӳмелле тата ытти те... Вăрман тенĕрен пĕр саманта асăнмасăр май çук. Йывăç-тĕмĕ хăйсем пурăнакан тăрăхра ӳсет пулин те унти йывăççене касма чарнă, таçти 100 çухрăм аякри делянкăсенчен турттараççĕ. Хĕл кунĕсенче хĕрарăмсем те кĕрĕк арки йăваласа лармаççĕ: çăм, йĕтĕн çиппи арлаççĕ, чăлха-нуски çыхаççĕ, пусма-тавар тĕртеççĕ. Мĕн пур çи-пуçа чăваш хăй тĕртсе çыхать».

Чăвашра платник ĕçĕ хисепре пулнине тĕпчевçĕсем пурте палăртаççĕ. Çурт хăпартас ăсталăх йăхран йăха куçнă. Паянхи яла илсен те пуртăпа ăста касса чутлакан çын сумлисен йышĕнче. Ăста платник хăйĕн пурттине е мăлатукне теприне шанса памастех. Юлашки вăхăтра электричество вăйĕпе çавăрттаракан, савалакан-касакан тĕрлĕ хатĕр çитрĕ яла. Йывăçпа ĕçлеме пĕлекенсене тулашри стройкăсенче те питĕ хапăл.

Çĕр айĕнчи пурлăхпа мухтанаймастпăр, пурнăçа ăнтаракан, ĕçре хастарлăх кăтартакан çынсем пурри – чăваш тĕрекĕпе пуянлăхĕ. Çак нухратпа пĕлсе усă курасчĕ.

### Урал тăрăхĕ, Çĕпĕр анлăшĕ

XVI-XVII ĕмĕрсем – Кăнтăр Урал тăрăхне халăх йышлă куçнă тапхăр. Тутарстанра, Пушкăртстанра, Самар, Чĕмпĕр, Саратов, Оренбург облаçĕсенче çĕр-çĕр чăваш ялĕ йĕркеленнĕ. Ахăртнех, çĕр хĕсĕккипе кăна инçе çула тухман чăвашсем, Христос тата мăсăльман тĕнне вăйпа йышăнтарни те аякка тарма хистенĕ. «Этем ури пусман çĕре» тутарсемпе мăкшăсем, çармăссем куç хывнă, вĕсен чĕлхипе пуплекен ялсем паян та сыхланса юлнă.

Вырăс патшалăхĕ хăйĕн чиккисене сарнă май халăх куçăмне вырăссем йĕркелесе ертсе пынă тесен тĕрĕсрех. Вырăнти халăх /Аçтăрхан тутарĕсем, нухайсемпе кыпчаксем/ лайăх хăç-пăшалланнă çара хирĕç тăрайман, çар иртнĕ хыççăн вырăс хресченĕсем çавăнталла туртăннă. Вĕсем хыççăнах – Атăлçин сахал йышлă халăхĕсем. Чăваш йăхĕсем çĕнĕ çĕрсене вăйпа тытса илнĕ тĕслĕх пирки пĕр халапра та тупса вулаймăр. Ял, юхан шыв, сăрт ячĕсем аваллăх паллисене упраççĕ. Сăмахран, Курган облаçĕнчи Шадринск районĕнче «Канаши» ял пур. Челябинск, Красноярск, Тюмень тăрăхĕсенче те çав ялсем тĕл пулаççĕ. Ан тив, хăш-пĕр ялта чăвашсем юлманпа пĕрех, çапах «Канашов» хушаматпа çут тĕнчене килнисем пур. «Чувашка» юхан шывра паян та пулă тытаççĕ, «Чăваш хирĕ» ят панă уйра тырă кашлани те мĕн çинчен те пулин калатех.

Ютран килнисене пушкăртсем хапăл туман, пăлхавсем çĕкленĕ. XVIII ĕмĕрте вĕсен тăрăхне сахал йышлă халăхсем ялĕ-ялĕпе куçнине çырса кăтартнă хутсем архивсенче упранаççĕ. Кĕтӳ кĕтнĕ çарана ют халăх килсе вырнаçни тарăхтарнă ĕнтĕ, çапах вырăссен çурчĕсене чĕртсе çунтарнипех çак юхăма чарайман вĕсем.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи Столыпин реформипе килĕшӳллĕн туса ирттернĕ миграци юхăмне этемлĕх историйĕнче халĕччен пулман халăх куçăмĕпе танлаштараççĕ. 1894 çулта Хусан чукун çулне /вăл чăваш хутлăхĕ урлă иртет/ хута яни, Самартан Оренбурга тата Златоуста пуйăссем çӳретме тытăнни çак юхăма татах вăйлатнă. Архив хучĕсем çирĕплетнĕ тăрăх – 1907 çулта çеç икĕ пин ытла чăваш хресченĕн çемйи Тобольск, Енисей, Томск кĕпĕрнисене пурăнма куçнă. Патша правительстви хăнăхнă çĕртен тапранса тухнисене малтанлăха укçа-тенкĕпе, çĕр ĕçлемелли хатĕрпе тивĕçтернĕ. Асăрхарăр пулĕ: «Çĕр – хресченсене» лозунг Ленинран тухнă чĕнӳ мар, вăл Столыпин реформатор пуçĕнче çуралнă. Революциччен çĕре хресчене валеçсе панипе Раççей тĕш тырă чи нумай туса илекен патшалăхсенчен иртсе кайнă. Хăйĕн çĕрĕ çинче хуçа пек туйнă хресчен. Советсем влаçа килсен ялти вăтам хресчен тĕревне тĕппипех касса татнине йышăнмаллах. Большевиксем халăха колхозсене хăваласа кĕртсе çĕртен сивĕтрĕç.

### Парти чĕннĕ – пуçтарăнмалла

Шăп та лăп утмăл çул каялла Коммунистсен партийĕн Тĕп Комитечĕн «Çĕршывра тыр-пул туса илессине ӳстересси тата уçман çереме алла илесси çинчен» постановленийĕ тухнă. Атăлçи, Урал, Казахстанпа Çĕпĕр тăрăхĕсене пысăк укçа хывмасăрах, мĕльюн яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа хутшăнтарса пурнăçа кĕртнĕ проекта паян тĕрлĕрен хаклаççĕ. Вăл вăхăтра Казахстан компартине ертсе пынă Леонид Брежнев Кремле çапла рапортланă: «Халĕччен пулман хастарлăх кăтартса ĕçленипе малтан пăхнă 600 млн пăт тырă вырăнне пĕр млрд пăт пухса кĕртрĕмĕр!» Пуçлăхсене çĕнĕ наградăсем çакса ямалли меллĕ самант çитнĕ. Сăмах та çук, халăхăн патриотлăх туйăмĕ нихçанхинчен те вăйлăрах пулнине палăртаççĕ истори çыравçисем. 1958 çулта ВЛКСМ XIII съезчĕ çамрăксене унта яланлăхах куçма чĕнсе каланине те яшкĕрĕмпе хĕр-упраç ырласа йышăннă.

Халăх куçăмĕ мĕнле пулса пынине сăнакан-тĕпчекен ăсчахсем çакна палăртаççĕ: Чăваш Енре ĕç вăйĕ ытлашшипех, çĕнĕ çĕрте вĕсем ытти наци çыннисемпе хăйсене лăпкă тытаççĕ, хирĕçӳллĕ самантсем сиксе тухсан та вĕсенчен аяккарах тăма ăнтăлни сисĕнет. Чи паха енĕ – хушнине пĕр пăркаланмасăр пурнăçлани, хура ĕçрен пăрăнманни. Куçса килнисен йышĕнче йăваш кăмăллисем ытларах. Наци айванлăхĕпе çитменлĕхĕ çинчен каламасть ку. Кулленхи хутшăнура чăвашсем кӳршĕсемпе туслă пурăнма тăрăшнипе пĕрлех хăйсен çемйисен ырлăхĕпе тăнăçлăхĕ пирки шухăшлаççĕ.

1947 çулта ЧАССР Министрсен Канашĕнче çынсене çĕнĕ çĕре куçаракан ятарлă пай туса хунă. 1953 çулта кăна 3 пин ытла чăваш çемйи Çĕпĕре пурăнма куçнă. Кашни çемье вăтамран 5-6 ачаллă пулнине шута илсен акă мĕн чухлĕн тĕпленнĕ çĕнĕ çĕрте!

Патшалăхăн пирĕн республикăри ĕçлев службин ĕçĕхĕлĕнче миграци ыйтăвĕ паллă вырăн йышăнать. Саха-Якутирен, Ямал-Ненец округĕнчен, Чита облаçĕнчен килнĕ заявкăсене тивĕçтереççĕ. Мускав, Чул хула, Воронеж предприятийĕсене хушма ĕç вăйĕ кирлĕ. Чăваш Енрен кайнисем шанăçа тӳрре кăларни паха. Ĕçпе тивĕçтерекен служба ячĕпе тав çырăвĕсем килнĕ. Якутири «Дражник» артель пуçлăхĕ В.Степанов çырăвĕнчен илнĕ йĕркесем кăмăла çĕклерĕç: «Кадрсене тĕплĕ суйласа илме пултарнă. Сирĕн республика янă ушкăнра чăвашĕ те, вырăсĕпе тутарĕ те пĕр çемьери пек пурăнаççĕ. Ĕçре пурте правур. Йĕркене пăсаканни çук. Укçа аван ӳкнине кура ĕç вырăнне нихăшĕн те çухатас килмест. Çĕнĕ çынсем килсен аслăраххисем кунти дисциплинăна хăнăхтараççĕ, эпир ӳсĕмлĕ ĕçлени çавăнтан килет. Сирĕнпе малашне те çыхăнса ĕçлес шухăшлă эпир».

Пулă шывра тарăнрах вырăн шырать тенешкел – çынна та лайăх тӳлевлĕ ĕç килĕшӳллĕрех ĕнтĕ. Анчах пирĕн халăхăн ытларах пайĕ паян республика тулашне каяс умĕн патшалăх службисенчен пулăшу ыйтманнине шута илмесĕр май çук. Миçе çын çулсерен тĕнче касса çӳренине статистика органĕсем те шутласа кăлараймаççĕ. Çавна май Вăрмар районĕнчи Геннадий Ямуков фермерпа калаçни аса килчĕ.

– Çур ял кил-çурчĕ пушă ларать. Вăй питти вăрăм укçашăн Мускава е Хусана çул тытнă. Ял тăрăхĕнче учетра тăраççĕ, анчах çыннине курмастпăр. Темиçе çултан трактор е комбайн рулĕ умне ларма çын тупаймăн. Мĕн патне пырса çитетпĕр капла?

Унăн пăшăрханăвне ăнланатăп. Ял ватăлать. Çĕр çинче ĕçлеме çын çук. Çак йĕркесен авторĕ хăй те Çурçĕре кайса килчĕ, чăвашсем инçетре, тĕнче хĕрринче, мĕнле ĕçлесе пурăннине хăй куçĕпе курчĕ. Ушкăнра Етĕрне, Муркаш, Çĕрпӳ районĕсенчен пухăннисем ытларахчĕ. Посредниксем урлă çыраннă вĕсем. Чылайăшĕн яланхи ĕç вырăнĕ, специальноç çук. Ямалта кунне пĕр пин тенкĕ ытларах ларни – çăтмаха лекнĕ пекех.

### Пуйма кайнă та...

Пирĕнтен маларах Ямал-Ненец автономи округне тепĕр ушкăн тухса кайнăччĕ. Вырăна çитсен чăвашсем хăйсене йĕркесĕр тыткаланă, хăшĕпĕри ĕçке яраннă. Çурçĕрте çуттипе туслисене вăрах тытмаççĕ, çиччĕшне килĕсене таврăнма хушнă... Шухăшлăрха: хăйсем тĕллĕн 3 пин тенкĕ çул укçи тӳлесе кайнă, каялла таврăнма тепĕр çавăн чухлĕ тăккаланмалла. Хаяр шĕвеке кура хăйсене тытса чарайманнипе юлташĕсен ятне яраççĕ-çке.

Чăн та, чăваш ĕçлеме ӳркенмест. Анчах унри кĕтӳ психологийĕ шалта ларни шухăшлаттарчĕ. Пĕр тĕслĕх çеç. «Ямалтрансстрой» предприятие ĕçе вырнаçнă чух мĕн пур хута туса çитернĕ хыççăн кладовщица патне кĕмеллеччĕ пирĕн. Унта ĕç тумĕ параççĕмĕн. Черет тăрас вырăнне пĕри те тепри алăкран вирхĕнсе кĕчĕ, вĕсем хыççăн – ыттисем. Çи-пуç «выçлăхĕ» пуçланнă тейĕн.

– Сурăхсем, эсир мана таптаса кайма хатĕр, культура тени пур-и сирĕн? Çын сăнсăпатне çухатнă эсрелсем! – çухăрать вырăс майри. – Ме, суйлăр хăвăра валли.

Икĕ-виçĕ михĕ çĕтĕк-çурăк тум ывăтрĕ тулалла. Халь арçынсем çав михĕсем çине сиксе ӳкрĕç, самантрах туртса çурчĕç. Пĕрне улшу кăçатă лекнĕ, теприн курткине тислĕкре йăвантарнă тейĕн.

Вар тытса кулмалли ӳкерчĕк. Анчах пĕртте кулăшла мар. Çав çынсемех килĕнче хăйсене ытла чарусăр тыткаламаççех, ашшĕ-амăшне итлеççех пуль. Кунта вара ирĕк, тем тусан та юрать имĕш.

Юрĕ, Çурçĕрте чăвашсене кадрсен пайĕ официаллă майпа йышăнни кăштах хӳтлĕх парать. Паян Мускав е Питĕр стройкисене тухса кайнисем пирки çавна калама йывăр. Вахтăна чĕннисемпе килĕшӳ туса чăрманмаççĕ. Ĕçре тепĕр чух сусăрланасси те пулкалать, вилсе килнĕ тĕслĕх сахал мар. Инкекре сире йышăннă организаци пĕр пус та тăккаланмассине пĕлсех тăратăп. «Укçа миххисене» – стройка хуçисене – пулас нухрат çеç кăсăклантарать.

ЧР Халăха ĕçпе тивĕçтерекен служба специалисчĕсем палăртнă тăрăх – 2014 çулхи пуш уйăхĕнче Чăваш Енре ĕçсĕрлĕх шайĕ /центрсем шута илнисем/ 0,74 процентпа танлашнă. Атăлçи тăрăхĕнчи тата Раççейри вăтам кăтартуран пĕчĕкрех ку. Пурĕ ĕçсĕр 4971 çынна /пĕлтĕрхи çак тапхăрта – 5588 çын/ регистрациленĕ. Çулталăк пуçланнăранпа 4062 çынна ĕç тупса панă. Центрсем пулăшнипе 659 çын хушма профессие алла илмелли курссене çӳрет.

Пĕр шутласан – халăх ĕç шыраса пĕр вырăнтан тепĕр çĕре куçнинче ним япăххи те çук. Килте ĕç çуккипе, шалу пĕчĕккипе юта çул тытаççĕ-çке.

Аякра тара кĕрешсе ĕçленин ырă енĕ пур – çын тĕнче курать, нумай ĕçе хăнăхать. Мускава тăтăш çӳрекенсем халь кирпĕч хума, плитка çыпăçтарма ăста. Яла таврăнса ав епле хӳхĕм çурт-йĕр çĕклеççĕ. Керменĕсене пăхса ытараймăн. Эппин, алли пырать. Çак ăстасен пултарулăхĕпе хамăр патра мĕншĕн çителĕксĕр усă куратпăр-ха, вĕсене кунта ĕçлесе пурăнма тивĕçлĕ майсем туса параймарăмăр-ши? Пысăк укçана хăнăхнă çын шухăш-кăмăлне улăштарма çăмăл маррине туятăп. Республикăри ĕçлев службинче Чăваш Енри предприятисемпе организацисенче 15543 ĕç вырăнĕ /ваканси/ пуррине асăнчĕç. Рабочи специальноçĕсем кирлĕ. Вунă пинлĕх шалупа никамах та килĕшмест. Ялта тата пĕчĕкрех-çке. Ку чухнехи çĕнĕ производствăсем йĕркелемесĕр, ĕç тухăçлăхне пысăклатмасăр шалăва ӳстереймĕн.



■ **Вячеслав ГРИГОРЬЕВ**

# Сиплевçĕ



## Тĕнче тавра

### Усал шыçăран... скорпион

Кубăра усал шыçă аталанакан çынсен пурнăçне хăйне евĕрлĕ эмелпе çăмăллăх кӳреççĕ. Вăл пулăшнипе ракпа чирлисем палăрмаллах самайланаççĕ. Эмеле кăвак скорпион наркăмăшĕнчен хатĕрлеççĕ. Çак тĕллевпе çĕр-шывăн шурлăхлă вырăнĕсенче ятарласа скорпион фермисем йĕркелеççĕ.

### Услам çупа, прополиспа

**Туберкулезран** эмел хатĕрлеме 200 грамм услам çу /килте хатĕрлени/, аçтăрхан măйăрĕ пысăкăш прополис кирлĕ. Прополиса вĕтетсе кастрюле хумалла. Пысăк кастрюле 2 литр шыв ямалла, çулăм çине лартмалла. Шыв вĕреме кĕрсен унта пĕчĕк кастрюле вырнаçтармалла – прополис шыв мунчинче ирĕлтĕр. Тепĕр савăтра услам çу ирĕлтермелле, прополиспа çăва пĕрле хутăштарса пăтратмалла. Кашни ирех апатчен 1 сехет маларах 1 апат кашăкĕ эмеле вĕри сĕтпе сыпса çимелле.

### Кăмăл пусăрăнсан

400 грамм сĕлле /хăрпăкĕ мар, кĕрпи кирлĕ/ вĕренĕ 6 литр шыва ямалла, вăйсăр çулăм çинче çурри таран чакиччен лартмалла. Сăрăхтармалла та 100 грамм пыл хушмалла. Кастрюле хупăпа хупласа хутăша тепĕр хут вĕретмелле. Сивĕнсен кĕленче савăтсене тултармалла, сивĕтмĕшре упрамалла. Ирхине выç варла, кăнтăрла апатчен 2 сехет маларах тата 4 сехетрен 1-ер стакан сыпкăмăн-сыпкăмăн ĕçмелле.

### Усăллă канашсем

- Шăл тунинчен юн тухсан лимон лайăх. Лимон сĕткенне шăл тунине сĕрмелле, шăлсене лектерме юрамасть.
- Шăл чăтмалла мар ыратать-и? Çарăка вĕтетмелле, 2 апат кашăкĕ тымар çимĕçе вĕренĕ 1 стакан шыва ямалла, 15 минут пĕçермелле. Çăвара ăшă шĕвекпе чӳхемелле.
- Шăл туни юнăхсан çăвара юман хуппипе çăка чечекĕн шĕвекĕпе чӳхемелле. Çак тĕллевпе юман хуппин çăнăхне çăка чечекĕпе /2:1 виçепе илмелле/ хутăштармалла. 1 чей кашăкĕ хутăша вĕренĕ 1 стакан шыва ярса вăйсăр çулăм çинче 3 минут вĕрилентермелле.
- Юн пусăмĕ час-часах ӳссен ирхине 1 стакан минерал шывне кăштах пылпа лимон сĕткенĕ хушса ĕçмелле.
- Çӳç лĕкĕленсен 4 лимон хуппине 1 литр шыва ярса 15 минут пĕçермелле. Шĕвекне сăрăхтарса эрнере пĕр хутчен çӳçе чӳхемелле.

## Ыйту-хурав

### Кремль диети те пулăшмасть

**Начарланас килет. Сахăр, кукăль-булка, çăкăр çиместĕп, анчах та кĕлетке виçи чакмасть. Кремль диети те пулăшмарĕ. Мĕн тумалла-ши?**

**Е.БОРИСОВА.**

Вĕретмен шыв ытларах ĕçме тăрăшмалла – 2 литр таранччен. Апатланнă чухне кăштах ĕçмелле, апат çинĕ хыççăн кирлĕ мар. Сăмах май, çăнăхран хатĕрленĕ, пылак çимĕçсемсĕр те ытлашши калори «пухма» пулать. Углеводпа пуян апатсене – çăкăр, пăтă, çĕр улми, макарон – 12-13 сехетчен çимелле. Çуллах мар аша е пулă татăкне, пахча çимĕçе /çусăр хатĕрлемелле/, çусăрлатнă тăпăрча каçхи апата хăварсан лайăхрах. Эрнере – пĕр хутчен çăмăл апат кунĕ ирттерни усăллă, çапах та организм çакна çăмăллăн йышăнсан çеç. Калăпăр, яра куна 1 килограмм улма-çырла е пахча çимĕç çимелле. Çăмăл апат кунĕсене çусăрлатнă тăпăрчпа /400 грамм/ ирттерни те вырăнлă.

Ытларах хускану туни тата çителĕклĕ çывăрни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

## Тутлă та, усăллă та

### Хурма запеканки

**3 хурма, 500 грамм тăпăрч, 200 грамм шĕвĕрех варени, 1 çăмарта, çур стакан манна кĕрпи, 1 апат кашăкĕ услам çу, 2-шер апат кашăкĕ сахăрпа хăйма, 1 апат кашăкĕ вĕтетнĕ сухари кирлĕ.**

Хурма хуппине шуратмалла, тăваткалласа турамалла. Тăпăрча çăмартапа, сахăрпа, манна кĕрпипе пăтратмалла. Çур сехетрен хурма хушмалла. Ятарлă формăна е противене çу сĕрмелле, вĕтетнĕ сухари сапмалла, хутăша вырнаçтарса тикĕслемелле. Çиеле хăйма сĕрсе духовкăра çур сехет пĕçермелле. Пиçсен варенипе илемлетмелле.

### Кăмпапа măйăр салачĕ

**1 килограмм шампиньон, çуршар килограмм суханпа кишĕр, аçтăрхан măйăрĕ 10-15 штук, 250 грамм хура слива, ӳсен-тăран çăвĕ, майонез кирлĕ.**

Вĕтĕ туранă кăмпана ӳсен-тăран çăвĕ ярса ăшаламалла. Сухана тата шултра теркăпа хырнă кишĕре уйрăм пăшăхламалла. Măйăра вĕтетмелле. Хура сливăна пăшăхламалла, вăррине кăларса улăм пĕрчи пек турамалла. Сухана, кишĕре, măйăра, хура сливăна пĕрле хутăштарса пăтратмалла. Салат савăтне çимĕçсене сийĕн-сийĕн хумалла: кăмпа, хутăш, кăмпа, хутăш. Салата хура сливăпа, вĕтетнĕ măйăрпа илемлетмелле.

## Халăх медицинин рецепчĕсем

### Çĕр улми ыратнине иртерет

Ал-ура хуçăлсан ыратнине ирттермелли чи ансат мел – чĕрĕ çĕр улмине теркăпа хырмалла, марльăпа чĕркемелле те ыратакан тĕле хумалла. Çĕр улми типиччченех тытмалла.

### Календула çăлăнăç вырăнĕнчех

Шăмă хуçăлсан ал-ура шыçасран календула пулăшать. 1 апат кашăкĕ календула чечекне термоса хумалла, вĕренĕ çур литр шыв ямалла. Шĕвек тепĕр сехетрен хатĕр. Ăна кунне 4 хут апат хыççăн çуршар стакан ĕçмелле. 1-ер апат кашăкĕ сар çип утипе шур чечек хушма юрать.

**Антонина ДОЛГОВА хатĕрленĕ.**

# Ансат пек, анчах...

***Ĕлĕк ăстасем чӳрече хашакĕсене эрешлесе илемлетнĕ, йывăçран касса кăларса тĕрлĕ япала, тăмран савăт-сапа т.ыт.те хатĕрленĕ, тĕрленĕ, чĕнтĕр, хăва вуллинчен карçинкка, сĕтел-пукан çыхнă... Шел, çулсем иртнĕ май çакăн евĕр ăсталăха пĕлекенсем чаксах пыраççĕ, ырă йăла-йĕрке манăçать.***

Куславккари Н.И.Лобачевский ячĕллĕ музей çурт ĕçченĕсем авалхи ремеслапа çамрăк ăрăва паллаштарас тĕллевпе Чăваш Республикин халăх ӳнер промыслисен ăстипе Юрий Орловпа тĕл пулу йĕркелерĕç. Вăл хăваран тĕрлĕ япала хатĕрлет.

Çак ремесла юхан шыв çывăхĕнче пурăнакансен хушшинче уйрăмах анлă сарăлнă. Куславкка районĕнче вара Тĕмшер тăрăхĕнче хăва вуллинчен тĕрлĕ япала тума пĕлекен йышлă. Кунта ăсталăх ăруран ăрăва куçса пырать. Юрий Ивановича та вăл ачаран çывăх.

Карçинкка çыхасси йывăр ĕç пек туйăнмасть. Анчах унăн вăрттăнлăхĕ чылай. Чи малтан, паллах, материал хатĕрлемелле. «Çурла уйăхĕн вĕçĕ – вулă пухмалли чи лайăх вăхăт, – ĕç меслечĕсемпе паллаштарать Ю.Орлов. – Çак тапхăрта хатĕрленисен хуппине тасатма çăмăл. Уйрăмах юхан шыв





çыранĕсенче, çырма хĕррисенче, шурлăх таврашĕнче тĕмленсе ӳсекен хăва аван». Ăсталăх класне Юрий Алексеевич чи ансат япаласене хатĕрлеме вĕрентнинчен пуçларĕ. Куç умĕнчех унăн аллинчи вулăсенчен искусство произведенийĕ çуралчĕ.

Халĕччен мĕн чухлĕ карçинкка çыхнине Ю.Орлов татса калаймасть. Пĕр ĕлкепе ĕçлесен те унăн алли витĕр тухакансkерсем кашни расна. Курав-ярмăрккана хутшăнма кăткăсраххисене хатĕрлет.

Хăва вуллинчен тунă япаласем паян кун та хисепре. Мĕншĕн тесен экологи тĕлĕшĕнчен таса материалтан ăсталанăскерсемпе усă курма меллĕ, илемлĕ вĕсем, илĕртӳллĕ, пысăк пахалăхлă. Шел те, çакăн евĕр япаласене чылай чухне куравсенче, музейсенче çеç курма пулать.

■ **И.СЕРГЕЕВА**

## Ахрăм

# Çамрăксен – яваплă тĕллевсем

***«Хыпар» хаçатра нарăсăн 12-мĕшĕнче пичетленнĕ «Пире ăçта чĕнеççĕ?» статьяна тимлĕн вуласа тухрăм. Унăн авторĕ Руслан Сайфутдинов чăваш наци юхăмне малалла аталантарассипе çыхăннă нумай ыйтăва хускатать. «Чăваш наци юхăмĕн тĕплĕн, пурне те ăнланмалла пултăр тесе утăмлăн-утăмлăн çырса хатĕрленĕ идеологи çук... Идеологие палăртманран чăваш наци юхăмĕ вăл е ку пĕлтерĕшлĕ те усăмлă тĕллев патне утни çинчен калама йывăр... Кар тăрса пĕр ĕç туса, пĕр çулпа утни çинчен каламалли те çук. Палăртнă идеологийĕ пулманран чăваш юхăмĕн хастарĕсене пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеме те çăмăл мар», – çырать автор.***

Мĕн вăл идеологи? Ăна камăн палăртмалла, урăхла каласан камăн çырса хатĕрлемелле?

Патшалăх тытăмĕ улшăничченн Совет Союзĕнче пĕр идеологи пулнă – марксизм-ленинизм. Халĕ Раççей Федерацийĕнче кашни партин хăйĕн идеологийĕ пулма тивĕçлĕ. Идеологие çĕр-шыври халăх политика органĕсене мĕнле хакланине, тивĕçлĕ органсем право ыйтăвĕсене мĕнле татса панине, çынсен шухăш-кăмăлĕ мĕнлине, тĕн мĕнле вырăн йышăннине т. ыт. шута илсе йĕркелеççĕ.

Паллах, пирĕн çĕр-шыври ертсе пыракан органсен тивĕçлĕ идеологи пур. Çав идеологи республикăн ертсе пыракан органĕсемшĕн те, чăваш наци юхăмĕн ертӳçисемшĕн те çирĕп саккун. Ăна куллен пурнăçласа пымалла.

Чăваш наци юхăмĕн мĕнле идеологи çинче никĕсленмелле, ăна камăн тата мĕнле тытса пымалла? Çак тата чăваш наци юхăмĕпе çыхăннă ытти ыйту мана иртнĕ ĕмĕрĕн вăтăрмĕш çулĕсенчех Шупашкарти педагогика училищинче ăс пухнă чухне те, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи умĕн тулли мар вăтам шкулта «СССР Конституцийĕ» предмета тата историе вĕрентнĕ вăхăтра та, КПСС Тĕп Комитечĕ çумĕнчи партин аслă шкулĕнче пĕлĕве тарăнлатнă, чылай çул идеологи учрежденийĕсенче ĕçленĕ тапхăрта та хытă хумхантарнă. Халĕ те ку ыйтупа кăсăкланатăп. Çавăнпа та Р.Сайфутдинов статйинче хускатнă ыйтусем пирки хамăн шухăша пĕлтерес килет.

Тĕрĕс çулпа пырсан идеологи общество аталанăвне кирлĕ пек вăйлатма пулăшать, тĕрĕс çултан пăрăнсан унăн аталанăвне хавшатать.

Идеологи ĕçĕнче философи паллă вырăн йышăнать. Пире философи обществăна «отрицание отрицания» текен принциппа аталантармалла, «спираль меслечĕпе» малалла каймалла тесе вĕрентнĕ. «Отрицание отрицания» тени вăхăт иртнĕçемĕн обществăри пулăмсене çĕнетсе, çулсерен хăпартса пымаллине пĕлтерет. Паян тунă ĕç /сăмах мĕн пур аталану çинчен пырать/, паян тунă çитĕнӳ ĕнер тунинчен лайăхрах пулмалла, ыран паянхинчен лайăхрах ĕçлемелле, пысăкрах çитĕнӳ тумалла. Чăн та, çак принцип обществăна малалла кайма пулăшакан принцип. Чăваш наци юхăмĕн представителĕсен пĕрех май шухăшламалла: юхăма вăйлатас тесен паян мĕн турăмăр, ыран мĕн тумалла?

Чăваш чĕлхине упрас, аталантарас ĕç çыру авторне хытă хумхантарать. Ку ыйтăва тĕрĕс татса пама майсем те пур. Аллă-утмăл çул каярах район, хула тата республика шайĕнче ирттерекен пухусенче тĕрлĕ халăх çыннисем кам мĕнле чĕлхепе калаçас тет, çав чĕлхепе калаçнă, ку енĕпе нимĕнле чару та пулман. Оратор хăйĕн шухăшне чăвашла каласа пачĕ пулсан, ятарласа уйăрнă çынсем унăн сăмахне вырăсла куçарнă. Калас пулать: ку йĕркене çирĕп тытса пынă. Пурăна киле вăл манăçа тухма пуçларĕ.

«Чăваш наци юхăмĕн тепĕр йывăрлăхĕ – аслă ăрупа кĕçĕн ăру пĕр-пĕрне ăнланманни... Çамрăксем ватăсене хаклама пĕлменни те пур», – тесе çырать автор. Чăн та, çамрăксенчен хăшĕ-пĕри хăйĕн хастарлăхне, хăйĕн вăйне, пĕлĕвне республикăна малалла аталанма парас вырăнне тĕнче касса çӳреççĕ. 80-90 çул ĕлĕкрех çамрăксемпе ĕçлес енĕпе лару-тăру урăхларах пулнă. Ун чухне ялти тĕрлĕ ыйтăва сӳтсе явас тĕллевпе хурал пӳрчĕсемпе те усă курнă. Ĕç вĕçленнĕ хыççăн каçсерен кашни кун тенĕ пекех ватă арçынсем хурал пӳртне пухăннă. Вĕсем тĕрлĕ ыйту хускатнă. Шур сухалсем мĕн каланине итлеме 17-20 çулсенчи яшсем те, 10-15 çулсенчи шкул ачисем те пынă. Ваттисем хăйсен ялĕнче, район центрĕнче, республикăри хуласенче пулса иртнĕ ĕçсем çинчен каласа панă, тĕрлĕ ыйту хускатнă. Ваттисем панă сĕнӳсем ял халăхĕн пурнăçне лайăхлатма пулăшнă. Çамрăксене воспитани парас ĕçре халĕ те çакăн пек меслетпе усă курмалла. Çак тĕллевпе кашни ялтах ваттисен канашĕсене йĕркелемелле. Унта çамрăк ăру умĕнче тăракан тĕрлĕ ыйту хускатмалла. Пĕр-пĕр çамрăк çын вырăнсăр ĕç турĕ пулсан ăна ăса вĕрентмелле, лайăх ĕçшĕн мухтамалла.

Çамрăксен умĕнче питĕ яваплă тĕллевсем тăраççĕ. Промышленноç предприятийĕсен ĕçне лайăхлатас, тыр-пул туса илессине ӳстерес, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре – çамрăксем тĕп вăй. Республика идеологийĕ хĕр-упраçпа яш-кĕрĕме çак ĕçсене чыслăн пурнăçлама хушать. Чăваш халăхĕ, Раççей Федерацийĕнчи ытти вун-вун халăх пекех, çĕр-шыв аталанăвĕн пур тапхăрĕнче те хăйĕн хастарлăхĕпе çамрăксене ырă тĕслĕх кăтартнă.

Чăваш наци юхăмĕ малалла мĕнле аталанасси çамрăксен çĕр-шыв, халăх, ваттисен умĕнчи яваплăхне, хастарлăхне, тавра курăмне мĕнле ӳстерсе пынинчен нумай килет.

■ **Анатолий СЕМЕНОВ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ**

# «Чĕлхе» тени чĕлхе кăтартни мар

Канаш районĕнчи Вăтакас Татмăш шкулĕнче ĕçлекен учительсем, ашшĕ-амăшĕ тата ачасем алă пуснă çыру /«Хыпар», 2014, пуш, 5/ икĕ тĕрлĕ шухăш çуратрĕ. Малтанах – ырри пирки. Юлашки вăхăтра хаçат-журналта критиклесе çырнине «эпир вуламан, тем çыратăр унта» тесе ирттерсе ярасси йăлана кĕчĕ. Ентешсем «хулăн тирлĕ» пулманни аван, çырăва хĕрӳленсе çырни сисĕнет. Эппин, вучах сӳнмен, чăваш чĕлхин пурнăçри вырăнĕ пирки кунта та шухăшлаççĕ. Чăн чăваш ялĕнчи шкулта тăван чĕлхе «предмет» анчах пулмалла мар ĕнтĕ, ача-пăча тăван юрăсене юрласа ӳсмесен çĕр-шыва юрăхлă гражданин-патриот пулаймĕ. Кунпа кам тавлашĕ?

Шел те, юлашки тапхăрта ырă мар пулăмсем вăй илни палăрать. Шупашкарта та, ялсенче те чăваш юррисене итлеме «состоится концерт» тесе йыхравлама пуçларĕç. Кĕнеке-хаçат тиражĕ чакрĕ. Халăх, вăл шутра ачасем те, капашсăр сахал вулаççĕ. Эппин, асăннă концерт тавра пуçланнă калаçу алăк питĕрсе «пăшăл пăтти» пĕçерсе илмелли ыйту мар. Çакна ăнланманни курăнать ушкăнпа алă пуснă çырура. Темшĕн кӳреннĕ те шкул ятне варалама шухăшланă – акă мĕнле «ăшăх» тĕллев тытнă иккен журналист.

«Кам саккасĕпе çыртăн çакна? Эпир тăвакан пысăк ĕçсене ăнланма сан образовани çитмест», – çапла евитлерĕ концерт лартнă çын телефонпа шăнкăравласа. Ку сăмахсемпе килĕшмех тивет. Аслă пĕлӳ «чечекленнĕ» тапхăрта пурăнатпăр-çке, кашни кĕсьере халь – 2-3 диплом. Саккас тени те пулнă, ку – чунчĕре «саккасĕ».

Ушкăнпа алă пуснă çырура «концерта икĕ чĕлхепе ирттерме никам та чарман», «çирĕм номертен çурри чăвашла пулсан аванччĕ» тесе кăтартни вырăнлăрах пулатчĕ. Тĕрĕслĕхе шута хурсах кайман ĕçе ачасене хутшăнтарни пушшех лайăх мар: саккун енчен пăхсан вĕсемшĕн кирек епле документ айне те ашшĕ-амăшĕн алă пусмалла. Çакна педагогсен пĕлмеллех.

2012 çулта Татмăшпа Янкăлч çĕрĕсен чиккинче юпа-палăк уçрăмăр, ăна Г.Фомиряков тата В.Эткер ӳнерçĕсем касса пачĕç, лартма ял çыннисем хутшăнчĕç. Çавăн чухне шкулти «Униче» фольклор ансамблĕ чăваш юррисемпе савăнтарнăччĕ. Асăннă концерта хастар ачасем хутшăнманни тĕлĕнтерчĕ. Хупнă иккен республика шайĕнче ырă ят илнĕ «Униченe». Кама кансĕрленĕ вăл? Пуррине салатма çăмăл.

Эпир, тавра пĕлӳçĕсен ушкăнĕ, Татмăш шкулне тăван тавралăх музейне уçас шухăшпа пынăччĕ. Архивсенче нумай çул документсем пуçтартăмăр, ĕç ушкăнĕ йĕркеленчĕ, Г.Фомиряков ӳнерçĕ пире пулăшма сăмах пачĕ. Музей концепцине туса темиçе хутчен те шкула ярса патăм, анчах хурав илеймерĕм. Кирлĕ мар пулас шкула пирĕн ĕç, пуçланă ĕçе ирĕксĕрех пăрахма тиврĕ.

Шкула юсаса çĕнетни аван. Унта Челябинскпа Тверь ачисемпе витĕнмесĕр тăван чĕлхене анлăрах вырăн парасчĕ. Унсăрăн шкул маччи те лутрарах, çути те тĕксĕмрех туйăнать.

■ **Валерий АЛЕКСЕЕВ, журналист, чăваш чĕлхин ведомствăсен хушшинчи комисси членĕ**

# Пур ыйтупа та – тивĕçлĕ йышăну

***Федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров федерацин территори тата Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисемпе координаци канашлăвне ирттернĕ.***

«Кун йĕркинчи ыйтусене мĕнле татса панине Раççей Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич сăнаса тăрать, – тенĕ вăл. – Паян эпир федерацин пĕлтĕрхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнче йышăннă «Раççей Федерацийĕн вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен» саккунăн 77-мĕш статйине улшăнусем кĕртесси çинчен» 370-ФЗ саккун полномочийĕсемпе килĕшӳллĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕлĕшпе сăнавпа тĕрĕслев ĕç-хĕлне йĕркелессине тишкерĕпĕр...»

Асăннă ыйтупа Чăваш Республикин прокуратурин, федерацин монополипе кĕрешекен службин республикăри управленийĕн, потребительсен прависене хӳтĕлекен службăн, Россельхознадзорăн, Улатăр район администрацийĕн ертӳçисем тухса калаçнă. «Халăх шухăш-кăмăлне шута илесси, ыйтăвĕсемпе ĕçлесси – ăна патшалăх пулăшăвĕ памалли тата халăхпа тачă çыхăнса ĕçлемелли усăллă инструментари. Çирĕпленнĕ йăла-йĕркене тĕплĕ тишкерсессĕн асăннă сферăра усă курмалли ырă резерв сахал маррине туятăн. Çавна май пирĕн информаци тивĕçтерĕвĕн ĕç-хĕлне тата çӳллĕрех шая çĕклемелле», – палăртнă тĕп инспектор.

Информаци политикин сферинчи тĕп мероприятисемпе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Ен Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов паллаштарнă. Вăл ĕç тăвакан влаç органĕсенче, вырăнти хăй тытăмлăхра пресс-секретарьсен ушкăнне йĕркеленине, кăçалтанпа Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн ларăвĕсене Интернетра кăтартнине, «Электрон правительство» портал уçăлнине, муниципалитетсенче влаç органĕсен сайчĕсем ĕçленине пĕлтернĕ.

Координаци канашлăвĕнче вăрман отраслĕпе тухăçлă усă курасси, унти коррупцие пĕтересси çинчен те сăмах пынă. Кун йĕркинчи пур ыйтупа та тивĕçлĕ йышăну тунă.

■ **А.СТЕПНОВ**

# Килĕшӳсене алă пуснă

***Пуш уйăхĕн 25-мĕшĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин Китай Халăх Республикинчи Сычуань провинцийĕнчи SICHUAN XILIN IM/EX CO., LTD и TRANSTECH ENGINEERING CORPORATION компанисен представителĕсене йышăннă.***

Китай компанийĕсен ертӳлĕхĕ пирĕн республикăна Раççей Федерацийĕн федерацин Атăлçи округĕнчи регионсен тата Китай Халăх Республикинчи Янцзы юхан шывĕ тăрăхĕнчи облаçсен хушшинчи суту-илӳпе экономикăра тата гуманитари сферинче пĕрле ĕçлемешкĕн килĕшӳ алă пусма килнĕ.

Китай компанийĕсен представителĕсем хăна çурчĕсемпе турист комплексĕсене тунă вырăнсене çитсе курнă, нумай функциллĕ «Одис Отель» хăна çурчĕн комплексĕн проекчĕн пуçаруçисемпе канашланă. Чăваш Республикин Транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министерствинче Шупашкар аэропорчĕн пĕтĕм тĕнчери авиаци терминалне тăвасси, Шупашкар хула администрацийĕнче тĕп хулан инфратытăмне улăштарма хутшăнасси çинчен сăмах пынă. Чăваш Енĕн Экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министерствипе тата Чăваш Республикин Аталану корпорацийĕпе уйрăм килĕшӳсене çирĕплетнĕ.

■ **Ю.СТЕПАНОВ**

# Дружинин приговорĕ паллă

***Чăн та, вăл вăя кĕмен-ха, анчах Шупашкарти Ленин районĕн сучĕн Федерацин миграци службин республикăри управленийĕн экс-пуçлăхĕ Леонид Дружинин тата çак ведомство водителĕ Александр Хлебников тĕлĕшпе палăртнă приговорĕ паллă ĕнтĕ.***

Ку ĕç-пуç пирки массăллă информаци хатĕрĕсем хăçантанпа шавлаççĕ те – тепĕр хут тĕплĕн çырни вырăнсăр, кĕскен çеç аса илтерер. Следстви комитечĕн вырăнти органĕсем тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх – Дружинин Хлебниковпа каварлашса служба автомобильне утилизациленĕ пек туса унпа хăй пĕлнĕ пек усă курнă. Çавăн пекех управлени пуçлăхĕ хăйĕн çĕрĕ çинче ют çĕр-шыв çыннисене ĕçлеттернĕ, взятка илнĕ. Ытти айăп та пур.

Суд Дружинина 2,5 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварса пĕтĕмĕшле режимлă колоние ăсатма йышăннă, 438 пин тенкĕлĕх штрафланă. Хлебниковăн – çулталăк çурăлăх условнăй айăплав.

■ **К.НИКОЛАЕВ**

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

Администрация Вурнарского района планирует предоставить в аренду земельные участки из земель сельскохозяйственного назначения сроком на 49 лет:

1) для сельскохозяйственных нужд:

- с кадастровым № 21:09:000000:2357 площадью 161020 кв.м., расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Вурнарский, с/пос. Кольцовское;

2) для сельскохозяйственного использования:

- с кадастровым № 21:09:180101:610 площадью 7441 кв.м., расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Вурнарский, с/пос. Апнерское;
- с кадастровым № 21:09:310201:549 площадью 9877 кв.м., расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Вурнарский, с/пос. Ершипосинское;

3) для сельскохозяйственного производства:

- с кадастровым № 21:09:240201:275 площадью 1016783 кв.м., расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Вурнарский, с/пос. Малояушское;
- с кадастровым № 21:09:080103:542 площадью 22563 кв.м., расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Вурнарский, с/пос. Ермошкинское;
- с кадастровым № 21:09:310108:68 площадью 30699 кв.м., расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Вурнарский, с/пос. Ершипосинское.

Заявки принимаются в течение месяца. Справки по тел. 2-54-44.

**23 апреля** зал Чувашской государственной филармонии **начало 18-30**

**100-летию со дня рождения выдающегося чувашского композитора и дирижера А.Г.Орлова-Шузьма посвящается**

ЗАКРЫТИЕ 90-го КОНЦЕРТНОГО СЕЗОНА

КОНЦЕРТ Чувашского государственного академического ансамбля песни и танца

Справки по тел.: 62-14-83, 62-54-48.

ПРОДАЮ

**33.Гравмассу, песок, керамзит,** щебень, торф. Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**172.Гравмассу, керамблок,** песок, **щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**196.Гравмассу, песок, щебень.** Дёшево. Доставка до 15 тн. Т. 8-902-328-26-67.

**«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ пуш уйăхĕн 29-мĕшĕнче тухать.**

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР



УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, “ХЫПАР” ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

“Хыпар” индексĕ – 54800, “Чăваш хĕрарăмĕ” – 11515, “Хыпар”-шăмат кун” – 78353, “Сывлăх” – 11524, “Çамрăксен хаçачĕ” – 54804, “Кил-çурт, хушма хуçалăх” – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ

РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор-тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/

Дежурнăй редактор И.Н.КЛЕМЕНТЬЕВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, “ХЫПАР”.

ТЕЛЕФОНСЕМ

Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

hypar2008@rambler.ru

Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, “Самана таппи”, “Компетентлă”** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 7254. Заказ 1086.